**Тăван кĕтес**

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăван кĕтес, сана манмарăм.
Ялан асра тытса усрарăм,
Тен, çавăнпах пуçа усмарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Атте-анне çуртне манмарăм.
Тăван чĕлхе чысне упрарăм,
Чăваш çĕрне ялан мухтарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Инкек сиксе тухсан тармарăм.
Çĕршывăма куç пек упрарăм,
Асаттесен ятне ямарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăванăмсем, сире манмарăм.
Хĕрӳ ĕçре кайри пулмарăм,
Çĕршыв çинчен чунтан юрларăм.

*Давыдов-Анатри, В. Тăван кĕтес : [сăвă] / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 159.*